26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
МАРТ
23
ЫТЛАРИКУН
64(6301) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Информациллĕ пĕлтерÿ

Çак кунсенче ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XIV-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ.

Пленум Чăваш область парторганизацинче ВКП(б) ретне çĕнĕ членсем илес ĕç мĕнле пыни çинчен, Чкаловски тата Вăрмар районĕсенчи колхозсемпе МТС-сем çуракине мĕнле хатĕрленни çинчен тата республикăри комсомол организацисене парти организацисем ертсе пырас ĕçе лайăхлатасси çинчен докладсем итлесе сÿтсе-яврĕ.

Пĕрремĕш ыйтупа ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ **Чарыков** юлташ, иккĕмĕш ыйтупа—ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсем **Валеевпа Смирнов** юлташсем, виççĕмĕш ыйтупа ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ **Ахазов** юлташ докладсем туса пачĕç.

Сÿтсе-явнă пур ыйтусем тăрăх та Пленум тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ.

ВКП(б) ОБКОМĔ.

Парти ретне ÿстерес тĕлĕшпе куллен ĕçлемелле

Кăçалхи мартăн 20-мĕшпе 21-мĕшĕнче ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XIV-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум ВКП(б) Чăваш организацинче парти ретне çĕнĕ членсем илес ĕç мĕнле пыни çинчен ВКП(б) Обком секретарĕн Чарыков юлташăн докладне итлесе сÿтсе-яврĕ, ку тĕлĕшпе малашне тумалли ĕçсене палăртса резолюци йышăнчĕ.

Пирĕн çĕршыв умне йывăрлăх тухса тăнă вăхăтсенче рабочисемпе хресченсен малта пыракан представителĕсем яланах парти ретне кĕме тăрăшнă. Отечественнăй аслă вăрçăн хаярлă кунĕсенче çакă уйрăмах вăйлăн палăрать. Малта пыракан рабочисемпе колхозниксем тата интеллигентсем партие кĕме, çапла вара нимĕç фашисчĕсене хирĕç пыракан кĕрешĕвĕн малти речĕсенче пулма тăрăшаççĕ. Пирĕн парти речĕсем ÿссе пыни парти малалла тĕрекленнине, вăл массăсемпе тачă çыхăнса тăнине, рабочисемпе колхозниксен тата интеллигенцин политикăллă активлăхĕ ÿснине кăтартса парать.

Парти ретне ÿстерсе пырас тĕлĕшпе чылай парторганизацисем тимлĕн тата куллен ĕçлеççĕ. 1942 çулта тата кăçалхи икĕ уйăх хушшинче пирĕн республикăри парторганизацире ВКП(б) членĕн кандидатне 1.688 çынна тата парти членне 999 çынна илнĕ. «Парти ретне кĕрсе, эпĕ хамăн пĕтĕм вăя, кирлех пулсан, пурнăçа та нимĕç фашисчĕсене хирĕç кĕрешес ĕçе парама пулатăп», тесе çыраççĕ парти ретне илме ыйтса заявлени паракан юлташсем. Парти ретне йывăрлăхсенчен хăрама пĕлмен, парти ĕçĕшĕн пĕтĕм чунне парса ĕçлеме хатĕр тăракан юлташсем кĕреççĕ.

Çапах та, вырăнсенчи парти организацисем чылайĕшĕ ĕççыннисен çак патриотла пысăк çĕкленĕвĕпе пĕтĕмĕшпех усă курмаççĕ-ха. ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ парти ретне ÿстерес ĕç республикăра çителĕксĕр пулса пынине палăртрĕ. Республикăри 627 пуçламĕш парторганизацирен 196 организаци 1942 çулта ВКП(б) ретне çĕнĕ членсем илес тĕлĕшпе пачах та ĕçлемен. Парти ретне комсомолецсене тата хĕрарăмсене уйрăмах сахал илнĕ. Çак ĕç Советски, Октябрьски, Чкаловски, Элĕк, Ишлей, Калинино тата Елчĕк районĕсенче пачах çителĕксĕр пулса пырать. Вăл районсенчи райкомсем парти ретне çĕнĕ членсем илес ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шаннă, райком секретарĕсем ку ĕçе ертсе пыма пăрахнă, хăйсен оргинструкторски отделĕсем çине шанса пурăннă.

Вăрçă вăхăтĕнче республикăра промышленность предприятийĕсене рабочисен хисепĕ ÿсрĕ, ялхуçалăхĕнче малта пыракан çĕнĕ çынсем ÿссе палăрчĕç. Апла пулин те республикăра парти ретне рабочисене, трактористсене, комбайнерсене тата колхозниксене сахал илнĕ. ВКП(б) чылай райкомĕсем промышленность предприятисенче, чугунçул çинче, МТС-семпе колхозсенче партиллĕ-политикăллă ĕçе начар организациленĕ.

ВКП(б) Улатăр, Красноармейски, Йĕпреç т. ытти райкомĕсем партине илме ыйтса панă заявленисене нумай вăхăт хушши пăхса тухмасăр выртараççĕ, партдокументсем памалли сроксене пăсаççĕ.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ парти ретне çĕнĕрен кĕнĕ юлташсем хушшинче ĕçлес тĕлĕшре те чылай çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ. Хăшпĕр парторганизацисем çĕнĕрен илнĕ юлташсем хушшинче нимĕнле ĕç те туса пымаççĕ, партие илнĕ хыççăнах вĕсем çинчен манса каяççĕ, вĕсен политикăллă пĕлĕвне ÿстерме пулăшмаççĕ. Кандидатра тăмалли стаж çамрăк коммунистсене вĕрентсе ÿстермелли тата тĕрĕслемелли вăхăт пулса тăнине манса хăвараççĕ. Çавна пула кăçалхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне республикăри парторганизацинчи кандидатсенчен 51 проценчĕн кандидатра тăмалли стажĕ иртсе кайнă. Çавăн пек кандидатсен хисепĕ Йĕпреç, Сĕнтĕрвăрри, Красноармейски, Етĕрне, Чкаловски районсенчи парторганизацисенче уйрăмах пысăк. Çамрăк коммунистсем хушшинче ĕçлейменнине пула, вĕсенчен хăшпĕрисем общественнăй ĕçе хутшăнмаççĕ, хăйсен пĕлĕвне ÿстерсе пымаççĕ, парти пухăвĕсенче пулмаççĕ тата член укçисене вăхăтра тÿлесе тăмаççĕ.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ çÿлте асăннă çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме хушса хăварчĕ. Парти ретне ÿстересси парти организацисен чи пысăк задачисенчен пĕри пулса тăрать. Çакна яланах асра тытса, парти организацисен çĕнĕ членсем илес тĕлĕшпе куллен активлăн ĕçлемелле. Пирĕн тăван çĕршыв интересĕсемшĕн пĕтĕм вăйне парса ĕçлекен, большевикла парти ĕçне чĕререн парăнса тăракан, ĕçре тĕрĕсленнĕ юлташсене парти ретне суйласа илмелле. Горкомсемпе райкомсен секретарĕсем çак ĕçе хăйсем ертсе пыма тивĕçлĕ.

Парти ретне малта пыракан рабочисене, трактористсене, комбайнерсене тата чи лайăх колхозниксене илессине вăйлатас пулать. Предприятисемпе чугунçул çинче, МТС-семпе колхозсенче массăллă-политикăллă ĕçе вăйлатмалла, партире тăман юлташсен активне пухса ÿстерсе пымалла, ăна общественнăй ĕçе хăюллăнрах явăçтармалла.

Парти ретне илме ыйтса панă заявленисене вăхăтра пăхса тухмалла, çĕнĕрен илнĕ юлташсене партдокументсем вăхăтра паманни пулмалла мар. Парти ретне илнĕ çамрăк коммунистсене большевикла воспитани парас ĕçе ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен тăтăшах туса пырас пулать. Партие çĕнĕрен кĕнĕ юлташсем хăйсен пĕлĕвне ÿстерсе пычăр, политика енĕпе пиçĕхчĕр, парти пурнăçĕпе общественнăй пурнăçа активлăн хутшăнса ĕçлетчĕр.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ партин райкомĕсемпе горкомĕсен секретарĕсене пуçламĕш парторганизацисенчи партиллĕ-организациллĕ ĕçе тĕпренех лайăхлатма хушса хăварчĕ. Парти пухăвĕсене пĕрмаях тата вăхăтра пухмалла, йышăннă решенисем мĕнле пурнăçа кĕнине куллен тĕрĕслесе тăмалла, коммунистсене партипе государствăн дисциплинине çирĕппĕн пурнăçа кĕртме вĕрентсе пымалла.

ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен комсомол организацисене ертсе пырас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемелле, вĕсене ĕçре конкретнăй пулăшу памалла, ĕçре тĕрĕсленнĕ чи лайăх комсомолецсене парти ретне илес ĕçе вăйлатмалла.

Хĕрарăмсем хушшинче массăллă-политикăллă ĕç туса пырасси çине парти организацисен уйрăмăнах çаварăнса пăхас пулать, хĕрарăмсен пухăвĕсене тăтăшах туса ирттермелле, вĕсене общественнăй ĕçе активлăрах хутшăнтармалла, ертсе пырас ĕçе хăюллăнрах лартмалла тата вĕсенчен чи лайăххисене большевикла парти ретне илмелле.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ йышăннă резолюцие пĕр пăрқаланмасăр, большевикла пурнăçа кĕртсе пырасси, ăна пурнăçа кĕртме кашни коммуниста мобилизацилесси — парти организацисен çывăх вăхăтри чи кирлĕ задачисенчен пĕри пулса тăрать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 21-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Хаяр çапăçусем хыççăн, командовани приказĕ тăрăх, пирĕн войскăсем Белгород хулине хăварнă. Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

Иртнĕ эрнере, мартăн 14-мĕшпе 20-мĕшĕ хушшинче, сывлăшри çапăçусенче тата тăшман аэродромĕсенче нимĕçсен 298 самолетне пĕтернĕ. Çав вăхăтра пирĕн 172 самолет пĕтнĕ.

* * *

Мартăн 20-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 15 танкĕнчен кая мар, войскăсемпе грузсем тиенĕ 200 автомашинăна çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой тата зенитнăй артиллерин 10 батарейине пусарнă, боеприпассен складне сирпĕтсе янă, пĕр катера путарнă, тăшманăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă е пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем малалла тапăнса пынă. Холм-Жирковскирен хĕвеланăçнерехре пĕр чаçăн соединенийĕсем, тăшман хирĕç тăнине сирсе пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Халăх пурăнакан пĕр пункта йышăннă чухне нимĕç пехотин икĕ ротине çити пĕтерсе тăкнă, 6 оруди, 3 миномет тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Кÿршĕри участокра пирĕн чаçсем Днепр хĕрринчи плацдарма сарассишĕн кĕрешсе пырса, халăх пурăнакан 12 пункта йышăнса илнĕ. Хĕрлĕ Çар чаçĕсене партизансем хастарлăн пулăшса пыраççĕ. Залазни ял çывăхĕнче партизансен ушкăнĕ вăрманта засада тунă. Тăшманăн каялла чакакан обозĕ çинелле пеме пуçласа, совет патриочĕсем нимĕç салтакĕсен пĕр ушкăнне пĕтерсе тăкнă. Гитлеровецсемпе çапăçнă чухне тытса илнĕ трофейăсене партизансем пĕр чаçăн боецĕсене панă.

* * *

Жиздрыран çурçĕререхре мартăн 19-мĕшĕнче ирхине артиллерирен вăйлăн персе тăнă хыççăн тăшман пирĕн позицисене атакăланă. Нимĕçсем çапăçăва пехотăн, танксен тата авиацин пысăк вăйĕсене хутшăнтарнă. Советсен оборона рубежĕсем патне пынă çĕрте хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Пирвайхи кун хушшинчех нимĕçсен 9-мĕш танковăй дивизин 11-мĕш мотострелковăй полкне аркатса тăкнă. Тăшманăн ытти чаçĕсем те пысăк çухатусем тÿснĕ. Тепĕр кунхине нимĕçсем çĕнĕрен атакăсем тума пуçланă. Анчах вăл атакăсем ăнăçлă пулман. Пирĕн войскăсем хăйсен позицийĕсене çирĕп тытса тăрса, тăшманăн чĕрĕ вăйне тата техникине нумай пĕтереççĕ. Икĕ кун хушши пынă çапăçусенче, туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсенне вилнисене кăна шутласан та 2.000 салтакпа офицерне пĕтернĕ. Нимĕçсен темиçе вуншар танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, 27 оруди тата 70 пулемет пĕтерсе тăкнă. Çав участокра çапăçусем малалла пыраççĕ.

* * *

Белый хулинчен кăнтăртарахра пирĕн войскăсем малалла тапăнса пынă. Пĕр чаçăн боецĕсем тăшман оборонин опорнăй пунктне йышăнса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшман виллисем 150 ытла выртса юлнă. Тăшмантан артиллери батарейине, 8 пулемет, радиостанци тата боеприпассем тиенĕ 13 лав тытса илнĕ.

* * *

Чугуев районĕнче пирĕн войскăсем тăшманăн танкĕсемпе мотопехотине хирĕç оборонăллă хаяр çапăçусем туса пынă. Юлашки кунсенче нимĕçсем çынсем тĕлĕшпе тата техника тĕлĕшпе пысăк çухатусем тÿснĕ. Çĕнĕ вăйсем васкаса илсе пырса, гитлеровецсем вĕсене тÿрех çапăçăва хутшăнтараççĕ. Халăх пурăнакан пĕр пункт районĕнче пирĕн боецсем тăшманăн 5 танкне тата нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра тăшманăн пысăк вăйĕсене хирĕç виçĕ кун хушши пĕр чарăнмасăр пынă çапăçусенче пирĕн пĕр часть 30 танкпа бронемашина тата тăшманăн пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн чаçсене хĕссе пырса, нимĕçсем халăх пурăнакан пункта йышăнса илме пултарнă. Çавăн хыççăн совет боецĕсем контратака тунă та, гитлеровецсене ывăтса ярса, хăйсен позицийĕсене каялла туртса илнĕ.

* * *

Кубань çинче пĕр чаçăн боецĕсем çĕрле шыв рубежĕ урлă каçнă та ăнăçлăн малалла кайса нимĕç оборонин ăшне шăтарса кĕнĕ. Çав вăхăтрах кÿршĕри чаçсем тăшмана флангсенчен çавăрса илме пуçланă. Хаяр çапăçусем хыççăн пирĕн войскăсем халăх пурăнакан 15 пункта, вăл шутра нимĕçсем вăйлăн тĕреклетнĕ опорнăй пункт туса хунă Петровская ятлă район центрне йышăнса илнĕ. Тăшманăн çухатăвĕсене тата тытса илнĕ трофейăсене шута илеççĕ. Совет летчикĕсем, çĕр çинчи войскăсене хастарлăн пулăшса, сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 15 самолетне персе ÿкернĕ. Кунсăр пуçне зенитнăй артиллерирен персе тăшманăн 6 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Гомель облаçĕнчи партизансен пĕр отрячĕ пысăк ялта тăракан нимĕç гарнизонне сасартăк пырса тапăннă. Партизансем тăшманăн 130 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсем арестленĕ 106 совет гражданне ирĕке кăларнă. Полесье облаçĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ боевой задание пурнăçа кĕртнĕ чухне ăна пытарса хунă нимĕç дзотĕнчен пеме пуçланă. Отрядăн пысăк хăрушлăх пулса тăнă. Рима Шершнева партизанка малалла чупса кайнă та дзотăн амбразурине хăйĕн пĕвĕпе хупласа лартнă. Паттăр патриотка герой вилĕмĕпе вилнĕ, анчах отряд командирне тата ытти юлташсене вилĕмрен хăтарнă. Партизансем дзотра ларакан гитлеровецсене вĕлерсе тăкнă та боевой задание ăнăçлăн пурнăçланă.

Мартăн 22-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Мартăн 22-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем малалла тапăнса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта тата Дурово чугунçул станцине йышăнса илнĕ. Хăшпĕр вырăнсенче нимĕçсем контратакăсем тунă. Пысăк çухатусем тÿссе, вĕсен каялла чакмалла пулнă. Пĕр участокра кăна пирĕн пĕр чаçăн боецĕсем 200 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ. Тăшмантан 4 оруди, 5 миномет, 13 пулемет тата боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Белый хулинчен кăнтăртарахра пирĕн чаçсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Пĕр соединенин боецĕсем халăх пурăнакан вăйлă тĕреклетнĕ икĕ пункта йышăнса илнĕ. Çавăнта пулнă çапăçусенче нимĕçсен 2 танкне персе çĕмĕрнĕ, 5 противотанковăй оруди тата 17 автомашина пĕтерсе тăкнă. Халăх пурăнакан пунктсен урамĕсенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 270 виллине шутласа кăларнă. Трофейăсем тата тыткăна илнисем пур. Тепĕр участокра пирĕн разведчиксен отрячĕ халăх пурăнакан пункта вăркăнса кĕнĕ те унта пулнă гитлеровецсене вĕлерсе пĕтернĕ. Разведчиксем боеприпассен икĕ складне сирпĕтсе янă, вара пĕр çухатусăрах хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Чугуев районĕнче пирĕн войскăсем оборонăллă хаяр çапăçусем туса пынă. Пĕр соединенин чаçĕсем тăшманăн темиçе атакине сире-сире янă, 5 танк тата 400 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра гитлеровецсем пирĕн подразделенисене хĕссе пĕр шыв рубежĕ урлă каçма темиçе хут та хăтланса пăхнă. Хастарлăн çапăçнипе пирĕн боецсем нимĕçсен атакисене пурне те сирсе пăрахнă. Козюлин юлташ ертсе пыракан гвардеецсем ĕнерхи кун нимĕçсен 3 танкне çунтарса янă тата тăшманăн пехотине пĕр рота ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Илмень кÿллинчен кăнтăртарахра пĕр чаçăн подразделенийĕ çĕрле тăшмана атакăланă та ăна тĕреклетнĕ позицирен хĕссе кăларнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 100 ытла вилли выртса юлнă. 7 пулемет, 2 миномет тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Кутузов юлташ ертсе пыракан разведчиксем тăшман тылне кĕрсе кайса 20 гитлеровеца вĕлернĕ те хăйсен чаçне чиперех таврăннă.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче тата тăшманăн аэродромĕсенче нимĕçсен 22 самолетне пĕтерсе тăкнă. Кунсăр пуçне зенитнăй артиллери тăшманăн 12 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Киев облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ пĕр эрне хушши çапăçса нимĕçсен полевой жандармерин батальонне пысăк çухатусем кÿнĕ. Çав вăхăт хушшинчех совет патриочĕсем темиçе кĕпере сирпĕтсе янă, пĕр паровоза тата 82 чугунçул цистернине çунтарса янă, цистернăсенчен пĕр пайĕнче горючи пулнă. Партизансем тăшмантан 18 пулемет, 107 винтовка, 12 пистолет тата боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Белорусс ССР-ĕнчи Полесье облаçĕнчи Бетчины ялĕнче нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем калама çук усал ĕçсем тунă. Нимĕçсен яла пырса çитнĕ карательнăй отрячĕ арçынсене, хĕрарăмсене тата ачасене виçĕ пысăк сарая хупса хунă. Гитлерла палачсем сарайсене вут тĕртнĕ те унта пулнă çынсене çунтарса янă. Тухса тарма хăтланакансене нимĕçсем пулеметсемпе пере-пере вĕлернĕ. Çапла вара фашистла тискерсене пула ялта нумай çын пĕтнĕ. Вăхăтра ялтан тухса тарса вăрмана кайнă çемьесем кăна тăрса юлнă.

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕнче

Профсоюзсемпе комсомолăн Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа пулса иртнĕ йĕлтĕрлĕ кросĕн итогĕсем

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Физкультурăпа Спорт Комитечĕ Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа пулса иртнĕ йĕлтĕрлĕ кросăн итогĕсене пăхса тухнă.

ВЛКСМ Обкомĕпе республикăри Физкультурăпа Спорт Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Шупашкар хулине (ВЛКСМ Горкомĕн секретарĕ Охандерова юлташ) тата Шупашкар районне (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Смирнова юлташ) пама йышăннă.

Профсоюзпа комсомолăн йĕлтĕрлĕ кросне ирттерес тĕлĕшпе çак профсоюз тата комсомол организацийĕсем, ДСО коллективĕсем, предприятисемпе колхозсем лайăх тĕслĕхсем кăтартнă: Комсомолăн Шупашкар хулинчи, Шупашкар, Комсомольски, Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи организацийĕсем, пуçламĕш тата туллимар вăтам шкулсенче ĕçлекенсен союзĕн Обкомĕ, «Динамо», «Спартак», «Большевик» спорт обществисем, комсомолăн Канаш хулинчи иккĕмĕш номерлĕ шкулти, Шупашкарти фармацевт шкулĕнчи, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Красная звезда» колхозри, Шупашкар районĕнчи Крупская ячĕпе тăракан колхозри, Етĕрне хулинчи вăтам шкулти организацийĕсем, Чăвашсен пединститучĕ, Тăвай районĕнчи Тĕмерти вăтам шкул, Шăхасан районĕнчи Кĕçĕн Кипечри вăтам шкул тата Шупашкар хулинчи физкультурăпа спорт комитечĕ.

Асăннă организацисемпе коллективсене ВЛКСМ Обкомĕпе республикăри Физкультурăпа Спорт Комитечĕн Хисеплĕ грамотисене парса наградăланă.

Профсоюзпа комсомолăн йĕлтĕрлĕ кросне хатĕрленсе ирттерес ĕçе лайăх ертсе пынăшăн 18 çынна ВЛКСМ Обкомĕпе республикăри Физкультурăпа Спорт Комитечĕн Хисеплĕ грамотисене панă.

Чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕн концерчĕсене пур халăхсен ывăлĕсем те юратса итлерĕç

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Брянск фронтĕнчи Н-ски чаçри командирсемпе боецсем Чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕн фронтовой бригадин концерчĕсене пысăк хаваслăхпа итлеççĕ. Фронта çак ансамбле янăшăн, пирĕншĕн тăванла ăшă кăмăлпа тăрăшнăшăн Чăваш АССР Правительствине вĕçĕмсĕр тав тăватпăр.

Чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕн концерчĕсем пысăк ăнăçупа пулса иртеççĕ, вĕсене пур халăхсем те — чăвашсем те, вырăссем те, украинецсем те, тутарсем те тата ытти халăхсем те пĕр пек ăшă кăмăлпа, юратса итлеççĕ.

Ансамбль концерчĕсем пире, боецсемпе командирсене нимĕç фашизмне хăвăртрах çĕнтерсе тăкассишĕн паттăр та мухтава тивĕç ĕçсем тума хавхалантарчĕç.

Концерта итлекенсем хушшинче: **Алексеев, Селиверстов, Албарцев.**

Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

ВЦСПС-па СССР Наркоммясомолпромĕнче

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе СССР Союзĕн Наркоммясомолпромĕ предприятисемпе хатĕрлев организацийĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи февраль уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

Вĕсем Канашри аш-какай комбинатне (директорĕ Баранов юлташ) виççĕмĕш преми пама йышăннă.

Çавăн пекех Улатăр районĕнчи выльăх-чĕрлĕх хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен конторăна (управляющийĕ М. Т. Синягин юлташ) — виççĕмĕш преми — 2.000 тенкĕ памалла тунă.

ДЕМКИН ЮЛТАШĂН БРИГАДИ МАЛТА

КАНАШ. Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, вагонсем юсакан заводри слесарьсен Демкин, Федотов тата Киселев юлташсем ертсе пыракан бригадисем март уйăхĕнче 15-шер вагон юсама обязательство илнĕ.

Вĕсем çак обязательствăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртеççĕ. Ăмăртура Демкин юлташăн бригади малта пырать. Çак уйăхăн малтанхи вунă кунлăхĕнче унăн бригади 6 вагон юсарĕ. Федотовпа Киселев юлташсен бригадисем те 5-шер вагон юсарĕç. Бригада членĕсем кашниех 2—3-шер çыншăн ĕçлерĕç.

ПРОИЗВОДСТВĂРИ ÇĔНĔ ÇĔНТЕРÿШĔН

ÇĔМĔРЛЕ, мартăн 22-мĕшĕ. Паланри катка-пичке тăвакан тата хăма çуракан завод (директорĕ Кузнецов юлташ) январьпе февраль уйăхĕнчи программăна 104,1 процент тултарнă.

Завод коллективĕ халĕ Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕ. Май уявне производствăри çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илес тесе, заводра ĕçлекенсем мартпа апрель уйăхĕсенче продукци туса кăлармалли плана 5 кун малтан — апрелĕн 25-мĕшĕ тĕлне 105 процент тултарма, продукцин хăйне ларакан хакне 5 процент чухлĕ йÿнетме, чĕртавара 3 процент чухлĕ перекетлеме, подсобнăй хуçалăха çуракине тухма тĕплĕн хатĕрлесе çитерме обязательство илчĕç.

ВĂРМАН ХАТĔРЛЕКЕНСЕН ХАСТАРЛĂХĔ

КАЛИНИНО. Чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе район Пинерти вăрман пунктĕнче ĕçлет. Вăрман хатĕрлевĕнче фронтри пек ĕçлемелли икэрнелĕхре транспорт валли вутă хатĕрлесси чылай хăвăртланчĕ.

Мăн Хирлепри «Строитель» колхоз членĕсен вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен бригади чугунçул транспортне çурçул хушшинче вутă тăратмалли плана мартăн 15-мĕшĕ тĕлне хатĕрлес енĕпе 120 процент, турттарас енĕпе 110 процент тултарчĕ. Çавăн пекех Мачамăшри «Первое мая» колхоз та чугунçул тансрортне планран ирттерсе 10 процент чухлĕ ытларах вутă хатĕрлесе пачĕ.

Вăрман хатĕрлекенсем тухăçлăн ĕçлеççĕ. «Клевер» колхозран вăрман хатĕрлеме кайнă П. Еремеева бригадин пархатарлă ĕçĕ Пинер вăрман пунктĕнче ĕçлекенсене пурне те паллă ĕнтĕ. Унта 9 хĕрача ĕçлеççĕ. Вĕсем кулленех вутă хатĕрлемелли плана 160 процент тултараççĕ. «Çутталла» колхозри Варвара Николаева ертсе пыракан бригада членĕсем кулленех иккшер çыншăн вутă хатĕрлеççĕ. Ф. Лаврова, Ю. Семенова юлташсем плана 210 процентран кая нихăçан та тултармаççĕ. 65 çулхи колхозник Александр Скворцов (Шĕнерти «Первое Мая» колхозран) кулленех 8,5 кубометр вутă турттарать.

Г. Матвеев.

Вăрçă вăхăтĕнчи налога тÿлеççĕ

ТĂВАЙ. Сталин юлташăн приказне ăнлантарса панă хыççăн Çăлпуçĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Д. Ефимова, Е. Григорьев, Е. Алексеева, М. Семенов юлташсем вăрçă вăхăтĕнчи налога пĕтĕмĕшпех тÿлесе татрĕç.

В. Я.

ÇУРАКИНЕ БОЛЬШЕВИКЛА ХАТĔРЛЕНСЕ КĔТСЕ ИЛЕР

Колхозăн çураки планĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.). Енишкри «Новая сила» колхозри колхозниксем Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен Верховнăй Главнокомандующийĕн Сталин юлташăн приказне тĕпе хурса ĕçлесе пыраççĕ. Хальхи вăхăтра колхозниксем Май уявĕ умĕн социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç.

Колхоз çуракине хатĕрленсе çитрĕ. Акмалли вăрлăхсем хатĕр, вĕсен шăтас пахалăхне тĕрĕсленĕ. Вăрлăхсем пурте кондицие лараççĕ. Кăçал колхоз пур ĕçсене тырăсене яровизацилесе тата ытларах акать. Кунсăр пуçне кĕрхи тырăсене апат пама хатĕрленет. Çак ĕçе тума хĕллехи вăхăтра 40 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 83 центнер кĕл тата кали тăварĕпе фосфорит çăнăхĕ чылай хатĕрлесе хунă.

Колхоз çуракине ирттермелли ĕç планне халех туса хунă. Çурхи тырăсене 10 кун хушшинче акса хăварма палăртнă. Çураки вăхăтĕнче хăш колхозник мĕн тумаллине ĕçлесси палăртнă. Кашни кун 12 плугпа 12 çын суха тăвать, 8 çын 20 лашапа сÿрелет, 4 çын икĕ сеялкăпа (А. Васильев, В. Антонов, Р. Буров, А. Васильев) икĕ смена хушши ĕçлеççĕ. Вĕсем валли вăйлă лашасем уйăрнă. Кунсăр пуçне 4 хĕрарăм уя вăрлăхсем турттарса тăмалла.

Колхоз кăçал 102 гектар çине сĕлĕ, 16 гектар çине урпа яровизацилесе акать, 28 гектар çине тулă, 36 гектар çине пăрçа акса хăварать. Çак мероприятисене тума кирлĕ хатĕрсене тата вĕсене тăвакан кадрсене уйăрнă. Яровизаторсем Е. Иванова, Е. Осипова, А. Андреева хăйсен ĕçне лайăх пĕлсе тăраççĕ.

Колхоз çĕрулми тата кантăр тухăçлăхне ÿстерессишĕн тăрăшать. Çĕрулми лартмалли вырăна кали тăварĕпе тата 50 центнер кĕл хураççĕ. Кантăр вырăнне кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе апат параççĕ. Çак ĕçсене тума икĕ çынна куçарса вĕрентсе хатĕрлерĕç.

Çуракине ирттерме колхозăн ялхуçалăх машинисем, лаша кÿлмелли хатĕрсем çителĕклĕ. Лашасем начар мар.

С. Шадин.

Туртăм вăйне акара ĕçлеме хатĕрлетпĕр

КОМСОМОЛЬСКОЕ. «Красное Сормово» колхоз çуракинчи ĕç планне турĕ. Кăçал çураки тума колхоз 27 лашапа тухать. Вăл шутра ĕçе пĕрремĕш хут кÿлĕнекен çамрăк лашасем 6. Хĕл вăхăтĕнче вĕсене кÿлсе çÿреме вĕрентсе çитерчĕ. Колхоз правленийĕ çураки вăхăтĕнче хăш лаша мĕнле ĕçре пулмалли халех палăртса хучĕ, вĕсемпе ĕçлеме колхозниксене çирĕплетрĕ. Сеялкăпа акнă çĕрте 4 лаша ĕçлемелле, ку ĕçсене тĕрĕслĕ лашасене уйăрнă.

Мартăн 20-мĕшĕнчен пуçласа çуракинче ĕçлемелли лашасене канма тăратаççĕ. Колхоз правленийĕ çак вăхăтра лашасене çитерме уйăрăм норма тунă. Кашни лашана кунне 4-шер килограмм, начартараххисене 6-шер килограмм сĕлĕ çитереççĕ. Пĕтĕм кĕсресене пурне те ĕçрен хăтарнă, вĕсене ытти лашасенчен уйăрăм пăхса усраççĕ.

Çуракине туса ирттерме правлени лаша апачĕсем уйăрса хучĕ. 50 центнер сĕлĕ, 30 центнер çăнăх тата 30 центнер утă хатĕрленĕ.

Колхоз правленийĕ хуçалăхри ĕçе майракалла шултăра вылăхсен вăйĕпе усă курма хатĕрленет. Эвакуаципе куçса килнĕ Е. Шаборовский юлташ икĕ вăкăра ĕçе вĕрентрĕ. Вăкăрсене кÿлмелли хатĕрсене те хăех тÿрĕ. Çапла икĕ вăкăр çăмăллăх хуçалăхри ĕçрен 3—4 лашана хăтараççĕ.

В. Андреев.

Тракторсем çуракине тухма хатĕр

Ишлей МТС-ĕ тракторсене юсамалли çулталарăки плана пурнăçларĕ. Капитальнăй ремонтран 20 трактор, текущи ремонтран 24 трактор юсаса кăларнă. Ытти тракторсене техника енчен пăхса тухса тÿрлетнĕ.

Партипе правительство постановленине сунсе-язса, МТС коллективĕ ялхуçалăх машинисене юсас ĕçе вăйлатрĕ. Çуракинче ĕçлемелли ялхуçалăх машинисене апрелĕн 1-мĕшĕччен пĕтĕмпех юсаса пĕтеретпĕр.

МТС тракторсен тата ялхуçалăх машинисен запаслă пайĕсене тăвас тĕлĕшпе 1943 çулти 1-мĕш квартал планне тултарчĕ. 1-мĕш кварталта пирĕн тракторсен запаслă пайĕсене 2.200 тенкĕлĕх юсаса çĕнетмеллеччĕ, эпир 2.350 тенкĕлĕх юсанă, çавăн пекех ялхуçалăх машинисен запаслă пайĕсене те планран ирттерсе юсанă, çĕнĕрен тунă.

Комбайнсен моторĕсене юсасси те хăвăрт пулса пырать. Халĕ 4 мотор юсанă. Тракторсене пурте комбайнерсем кăçал нумай хут тухăçлăрах ĕçлессишĕн пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç, конкретлă обязательствăсем илчĕç.

Е.Тепеев.
МТС политотдел начальникĕ.

Фронтовиксен çемьисене пулăшмалли вунăкунлăх

Вăрçă инвалидĕсемпе фронтовиксен çемьисен ыйтăвĕсем çине чунсăрла пăхни пулмалла мар

ÇЕМЕРЛЕ. (Хамăр корр.). Фронтовиксен çемьисемпе вăрçă инвалидĕсен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатассишĕн кунта ку таранччен кирлĕ пек ĕçлемеççĕ-ха.

Фронтран аманса таврăннă Федор Немцев «Партизан» артеле çĕлĕк çĕлетес ыйтупа виçĕ хутчен пынă. Артель руководителĕсем ăна «материал çук» тесе ăсатса янă, çав вăхăтрах хăйсене çывăх çынсене çĕлесе панă.

Немцев юлташ райисполкома вутă илме ордер патне пынă. Ăна райплан председателĕ: «Эсĕ Çара кайиччен комбинатра ĕçленĕ, вутă çавăнтан кайса ил», тесе ответленĕ. Комбинатра снабжени директорĕ Девин юлташ ăна: «Эпир фронтовиксем валли вутă хатĕрлемен», тесе ăсатса янă.

«Красный Октябрь» артель те атă-пушмаксем юсама заказ «çывăх çынсенчен» çеç илет. Фронтовик арăмĕ Павлова юлташ атă юсаттарас шутпа артеле пĕр хутчен çеç мар пынă, анчах «заказсем чылай йышăннă» тесе унăн заказне йышăнман. Павлова юлташăн кÿçĕ умĕнчех «хăйсен çыннисенчен» заказ йышăннă. Çакă вăл фронтовиксен çемьисене хытă пăшăрхантарать.

Х. Лисин.

Çак пулăшушăн фронтовиксем тав тăвĕç

КАНАШ. Фронтовиксен çемьисемшĕн тăванла тăрăшасси—пĕтĕм халăхăн хисеплĕ тивĕçĕ. Çакна асра тытса, «Швейник» артелĕн коллективĕ фронтри юлташсен çемьисене яланах пулăшса тăрать.

— Военнослужащисен çемьисене пулăшни—нимĕç захватчикĕсене аркатса тăкмашкăн хамăрăн паттăр воинсене пулăшниех пулать, — тет вата работница Абарбанель юлташ. —Фронтовик хăйĕн çемьишĕн пĕтĕм халăх тăрăшассине шанса тăрать.

Эпир фронтовиксен çемьисене пулăшас ĕç валли пĕр кунхи ĕçукçине патăмăр. Ятарласа воскресник ирттеретпĕр, ĕçшĕн тивекен укçана йăлтах фронтовиксен çемьисене пулăшнă çĕре паратпăр. Кунсăр пуçне тумтир, атă-пушмак тата пахчаçимĕç парса пулăшатпăр.

Фронтовиксен çемьисене пулăшмалли вунăкунлăх пуçлансан, пĕр кун хушшинче фронтовиксен çемьисене пулăшма артель членĕсем 60 мăшăр пушмак, 5 минтер пичĕ, 8 мăшăр чăлха, 4 пăт ытла çĕрулми пухрĕç. Хăшпĕр работницăсем 4—5-шер япала пачĕç. Анастасия Налимова пурçăн шарф, 2 мăшăр туфли, пĕр минтер пичĕ, чашăк-тирĕксем пачĕ. Ку ĕçе Пыгина, Софронова юлташсем те активлăн хутшăнчĕç.

Кунсăр пуçне эпир фронтовиксен арăмĕсене Шатова, Пыгина юлташсене, вăрçă инвалидне Берсенов юлташа вутă турттарса патăмăр. Фронтовиксен кашни çемьине кайса, вĕсен пурнăçпа йăла условийĕсене тĕрĕслерĕмĕр.

Артель коллективĕ фронтовиксен ачисем валли ĕç хыççăн 192 мăшăр ача-пăча пушмакĕ, 64 минтер пичĕ çĕлеме обязательство илчĕ.

А. Ильин.
«Швейник» артель правленийĕн председателĕ.

Комсомолецсем малти ретре

ШАХАСАН. Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче районри колхозсен уйхирĕсенче 35 çамрăк тракторист ĕçлерĕç. Вĕсем кашниех çулталăк планне ăнăçлăн тултарчĕç. Сезонра 5.789 гектар сухалас вырăнне вĕсем 6.962 гектар сухаланă, 3.387 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

7-мĕш бригадăри Нина Иванова трактористка СТЗ тракторпа 177 гектар çинчи ĕçе тăвас вырăнне 380 гектар сухаласа 70 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. 8-мĕш номерлĕ бригадăри трактористка комсомолка С. Николаева 236,83 гектар сухаланă, 101 килограмм горючие перекетленĕ.

Комсомолецсемпе çамрăк трактористсем кăçал тата тухăçлăрах ĕçлеме, кашни 15 лаша вăйлĕ трактор пуçне, çемçе суха çине куçарса шутласан, 800 гектартан кая мар сухалама, 10 процент горючи перекетлеме обязательство илчĕç.

Горючине перекетлес ыйтăва эпир пысăк вырăна хуратпăр. Çавăнпа çунтармалли япаласене мĕнле расходланине контрольлесе тăма комсомолецсенчен постсем организацилерĕмĕр.

Комсомолецсем МТС-ра ĕçлекенсем хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне аван туса пыраççĕ. МТС-ра «За рулем» ятлă стена хаçачĕ тухса тăрать. 1942 çулта 24 номер, 1943 çулта 3 номер кăларнă.

МТС-ра пурĕ 23 комсомолец. Вĕсем пурте агитаторсем пулса ĕçлеççĕ, 1943 çулта кăна докладсемпе калаçусем 16 хутчен ирттернĕ.

Комсомолецсен йышĕ ÿссех пырать. Февраль уйăхĕнче комсомол ретне 15 çамрăка илнĕ.

О. Виноградова.

Ют çĕршывсенче

США конгресĕ фашистла преступниксене питлет

ВАШИНГТОН, мартăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). США-ри представительсен палати пĕр сасăпа çапла резолюци йышăннă:

«Америка халăхĕ нацистсем оккупациленĕ çĕршывсенче мирлĕ халăха тискеррĕн асаплантарнине, çав шутрах еврей çыннисене, хĕрарăмсемпе ачасене массăллăн вĕлернисене çав тери тарăхса питлет. Нацистсен çав политики терропа тискерлĕх пулса тăрать. вăл Польшăри тата Центртипе Хĕвелтухăç Европăри халăхсене вĕлерсе пĕтересси патне илсе пычĕ. Çавна пула палата çапла йышăнать: хÿтĕлĕхсĕр арçынсене, хĕрарăмсене тата ачасене нимĕнпе те ăнлантарма çук тискеррĕн тыткаланине сивлеме кирлĕ тесе шутлать тата сивлет, вĕсем цивилизованнăй тĕнчере кирек епле çĕршывра та е правительствăна та тивĕçлĕ мар тесе шутлать. Палата малалла çапла йышăнать: гуманность шухăшĕсем тата вăрçа тÿрĕ кăмăллăн туса пырасси çав нимĕнпе ăнлантарма çук вĕлерÿсемпе тискерлĕхсене пĕтермелле. Çав тискер ĕçсене тунă çĕре тÿрремĕнех е тÿрремĕн мар хутшăннипе айăплă пулнă çынсене ответ тыттармалла тата хăйсем айăплă пулнă тăрăх вĕсене наказани памалла».

Çакăн пек резолюциех сенат маларах йышăннă пулнă.

ЮГОСЛАВИ ПАРТИЗАНĔСЕН КĔРЕШĔВĔ

ЖЕНЕВА, мартăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен килнĕ пĕлтерÿсем тăрăх, итальянецсемпе нимĕçсен тата усташасен войскисене хирĕç партизансем хаяррăн çапăçаççĕ.

Неретва шывĕ тăрăх тата Сараево— Мостар чугунçулĕ тăрăх вăйлă çапăçусем пулса пыраççĕ. Шывăн сулахай енне каçса, партизансем Кониц хули çывăхĕнчи сăртлă районра тăракан усташа чаçĕсене хирĕç наступлени пуçласа янă. Çавăнта пуçланса кайнă çапăçусенче партизансем тăшманăн 120 салтакне пĕтерсе тăкнă, 40 салтакпа офицерне тыткăна илнĕ. Мостар хули çывăхĕнче партизансем пĕр чугунçул станцинче вырнаçнă тăшман колоннине аркатса тăкнă. Партизансем нумай хĕçпăшал, апат-çимĕç склачĕ тата çар докуменчĕсем тытса илнĕ.

Словенире те çапăçусем çаплах пыраççĕ. Партизансен икĕ пысăк отрячĕ Камник тата Моровац ятлă халăх пурăнакан пунктсем çывăхĕнче пулнă çапăçусенче нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ тата çар хатĕрĕсене чылай тытса илнĕ. Сасартăк пырса тапăнса, партизансем Градац тата Отрич ятлă халăх пурăнакан пунктсене йышăнса илнĕ тата тăшманăн икĕ танкне, автоматла хĕçпăшалне тытса илнĕ.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ НЕАПОЛЕ ТАПĂННИ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). США сывлăшри вăйĕсен штабĕ Каиртан пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 18-мĕшĕнче кăнтăрла тата мартăн 19-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Америкăн йывăр бомбардировщикĕсем Неаполь гаванĕ çине вĕçсе пырса тапăннă.

ШВЕЦИ НЕЙТРАЛИТЕТНЕ ПАСНИ

СТОКГОЛЬМ, мартăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Швеци хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 24-мĕшĕнче Швеци территорийĕ çине, Вермланд провинцин çурçĕр-хĕвеланăç пайне нимĕçсен почтовăй самолечĕ «ирĕксĕр анса ларнă». Унăн пассажирĕсене — çар формиллĕ тăхăннă 15 нимĕçе тата сестрана — Швеци офицерĕсем хуралласа Норвегие кайма Шарлотенберга çитиччен ăсатса янă. Чикĕ урлă каçнă чухне Швеци влаçĕсем вĕсене хĕçпăшалĕсене каялла тавăрса панă. Ăсаннă самолет çинче пулеметсем те пулнă. Хаçатсем пĕлтернинчен çакă паллă: Швеци урлă Норвегипе Финляндие вĕçсе çÿреме нимĕçсен хăшпĕр самолечĕсене ирĕк парас тĕлĕшпе Швеципе Германия хушшинче килĕшÿ тунă. Çав маршрутсенчен пĕринче çÿрекен самолетсене хăшпĕр чухне Стокгольмри Бромма аэропорчĕ урлă вĕçсе каçма тата унта анса ларма ирĕк панă.

«Нюа Даглигт Аллеханда» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Гюнтер, Риксдагра депутат Иенссон ыйтăвĕ çине ответлесе, çапла каланă: Швеци нейтралитечĕн правилисем тăрăх, вăрçакан çĕршывсен çар самолечĕсем Швеци территорийĕ çине вĕçсе кĕме пултараймаççĕ. Çавăнпа та почтовăй самолетсем те вĕсем çар самолечĕсем пулмасан çеç вĕçсе каçма пултараççĕ. Вĕсен экипажĕнче штатски çынсем çеç пулмалла, самолетсем хăйсем те хĕçпăшалланнă пулмалла мар. Анчах та февралĕн 24-мĕшĕнче анса ларнă самолет çинче икĕ пулемет пулнă. Гюнтер çапла пĕлтернĕ: правительство нимĕç влаçĕсене «Швеци территорийĕ урлă вĕçмелли правилăсем çинчен астутарнă», вăл правилăсене тĕплĕн пурнăçа кĕртсе пыни малашне сывлăшри почта çыхăнăвне тума май парать, тесе пĕлтернĕ.

Депутат Иенссон çапла каланă: Гюнтер ответĕ общество кăмăлне каясси çинчен эпĕ иккĕленсе тăратăп, тенĕ.

Депутат Шагберг çакна паллă тунă: самолет ларнă çĕре пырса çитнĕ патруль боевой патронсем те илмен. Нимĕçсене хĕçпăшалсăрлантарман, шведсене самолет ăшне кĕме ирĕк паман. Нимĕçсем хăйсен пĕтĕм багажне илнĕ, вĕсенчен иккĕшĕ самолета хурал тăма çавăнтах юлнă. Самолет çинче хĕçпăшаллă офицер пурри килĕшĕве тÿрех пăсать пулин те, правительство ниепле мерăсем те йышăнманни питĕ тĕлĕнтерет, тенĕ. Самолет çинче пулеметсем пурри çинчен Швеци командованийĕ ютçĕршыв ĕçĕсен министерствинчен пытарни те питĕ тĕлĕнтерет, тенĕ.

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

ĂМĂРТКАЙĂК

ПОЭМА

3. Якур мучи юмахĕ

Çав-çав çĕрте, çав çĕрте,
Вĕçĕмсĕр çеçен-хирте,
Çĕрпе пĕлĕт хушшинче,
Ырă сывлăш уççинче,
Çÿт хĕвелĕн ăшшинче
Пуянăн та чухăнăн
Пĕр сунарçă пурăннă.

Ухă пулнă — пурлăхĕ,
Тĕнче пулнă — ырлăхĕ,
Юлташ пулнă — ăмăрткайăк,
Вĕçсе пынă вăл çÿлтен.
Пурнăç пулнă пыл пек лайăх,
Анчах пыл мĕнне пĕлмен.

Чухламан мĕскер вăл хуйăх,
Пурте янтă, пурте хатĕр
Нушине те ăнланман.
Каçхине çутатнă уйăх,
Кăнтăрла вара ахаль те
Уншăн пулнă пит аван.

Пуснă ура кĕллипе —
Шывĕ тухнă кÿлĕ пек.
Туртса янă çĕмренне —
Кайăк ÿкнĕ ун умне.

Хĕвел хĕртнĕ — ăшаланнă,
Ларнă, çинĕ — апатланнă,
Унтан утнă малалла.
Каç пулсассăн канмалла,
Уйхир пулнă — ун минтерĕ,
Пĕлĕт пулнă — çивитти.
Пурнăç пулнă—эс мĕн терĕн,—
Кунта çук-ха ун пекки.

Ăмăрткайăкĕ унтах —
Ларнă тĕрĕс хуралта.
Кăнтăрла та ыйăхман вăл,
Каçхине те куç хупман вăл,
Пуç вĕçĕнче пĕр пĕччен
Ларнă çапла вăл ирччен.

Малалли. Пуçламăшĕ 61-мĕшпе 62-мĕш номĕрсенче.

Çитмĕл çичĕ çил тухсан та,
Тымак çăмăр тапрансан та,
Çунаттипеле хупланă
Хăйĕн шанчăклă тусне.
Тусĕшĕн çапла пултарнă
Пур инкексене тÿсме.

Ирпе тăнă хаклă тусĕ
Питне çунă сывлăмпа.
Çав сунарçăн пичĕ-куçĕ
Сывă пулнă çавăнпа.
Ăмăрткайăкĕ çĕкленнĕ
Татах пĕлĕтрен çÿле.
— Эп кунтан сыхлатăп,—тенĕ,—
Эсĕ çĕр çинче çÿре.

Çÿлтен пурте курăннă,
Аçта майлă, вырăнлă,
Аçталла кайсан аван —
Ăмăрткайăк — ыр тăван
Хăй тусне йăлтах систернĕ,
Куç шăрçи пек хÿтĕленĕ,
Нихăçан та пăрахман.
Куç умне инкек тухсассăн,
Сĕмсĕр кашкăр курăнсассăн,
Ăмăрткайăк тÿперен,
Чул пек вăркăннă çĕре.

Çутă хурçă пек хăватлăн
Чĕрнине вăл кĕртсе лартнă
Сĕмсĕр кашкăр ĕнсине.
Унтан çивчĕ сăмсипе
Çав тăрлавсăр кашкăрăн
Ик куçне те харсăррăн
Чавса илнĕ çийĕнчех,—
Халь каяймăн пит инçех.

Çапла çынпа ăмăрткайăк,
Пурăннă питех те лайăх,
Пĕр-пĕрне хуçа темен,
Хăрхăм-тарçă та темен;
Кайăк савнă этемме,
Этем савнă кайăка,
Пурнăç пынă лайăхах.

Сак сунарçă хăй тусне
Пĕчĕкрен пăхса ÿстернĕ.

Кайăк пĕчĕкрех чухне
Хăйĕн хулпуççи çине
Вăл ăна лартса çÿренĕ.
Алăран апат çитернĕ,
Унтан çÿлелле вĕçтернĕ
Тусем урлă инçене.
Вăл çапла вичме вĕрентнĕ
Аслă çутă тĕнчене.
Кайăка вăл ят та хунă,
Унăн ячĕ Ирĕк пулнă,—
Ĕмĕр-ĕмĕр ирĕкре!
Сенкер çутă тÿпере,
Ирĕкĕм, çÿре хăюллăн,
Çил çÿренĕ пек çÿре.

Çапла иккĕшĕн вĕсен
Пурнăç пулнă хăрушă мар.
Анчах çывăхрах иккен
Вĕсен пулнă пĕр тăшман.

Хăрпан-пуç патша панчен,
Тĕксĕм сĕм-вăрман енчен,
Ансăртран, çĕрле пĕрре,
Туссем çывăрнă çĕре
Вĕçсе килнĕ, вăрă майлă,
Икĕ пуçлă ăмăрткайăк.
Ирĕкпеле сунарçа
Вăл шутланă çав каçах
Систермесĕр тапăнма,
Хурахла тытса кайма,
Хăрпан-пуç патша валли
Сĕткенпе юн сăхмалли,
Витесем тасатмалли
Чĕмсĕр хур-чура тума,
Çурăм урлă кашни кун,
Выльăх пек, патак хума.

Икĕ пуçлă ăмăрткайăк —
Тăхланран çуначĕсем.
Хурлăх курнă нумай халăх,
Тухайман ун айĕнчен.

Икĕ пуçлă ăмăрткайăк
Ĕмĕтленнĕ: — Тытса кайăп,
Систермесĕр, вăрă пек,
Юлашки çак Ирĕке.

Акă каçĕ тĕм-хура,
Акă вăл вĕçсе пырать
Ирĕклĕ çеçен-хире,
Икĕ тус та ик чĕре
Лăпкăн çывăрнă çĕре.

Анчах çĕрлехи тăшман,
Шăппăн вĕçеймен ниçтан.

Тăхлан çунат варкăшать,
Хирти кăлкан каш-кашлать.
Шăхра-шăхра çил вĕрет,
Хăрушлăха систерет.

Ирĕк-кайăк кăларать
Пуçне çунат айĕнчен.
Хăйĕн тусне вăратать
Инкек килсе çитиччен.
Унтан, вут та çиçĕм пек,
Çурса тĕксĕм тÿпене,
Хăйĕн пĕтĕм вăйĕпе
Çÿлелле вăл хăпарать.

Ак пуçланчĕ çапăçу,
Ай, хаяр-çке чăтма çук.
Тăвăл мар ку, çăмăр мар.
Пăрпа хутăш пĕрхĕнет.
Çитмĕл çичĕ çухрăма
Чĕп-чĕр юнах сирпĕнет.

Икĕ пуç та тватă куç,
Паллах ĕнтĕ, хăватлах.
Анчах пирĕн Ирĕк-тус
Парăнмасть-çке хăвăртах.

Пуçĕ унăн иккĕ мар,
Анчах ÿснĕ ирĕкре.
Куçĕ унăн тваттă мар,
Анчах чунĕ çирĕпрех.

Пăлтăр-пăлтăр çаврăнса,
Икĕ пуçлă вăр-хурах
Халран кайрĕ сăлпăрах;

Вара çакă самантра
Ирĕк-кайăк тăшманран
Аяккарах пăрăнчĕ.
Унтан татах пур вăйран
Тăшман çине тăрăнчĕ.
Сутă хурçă сăмсипе
Пырса çапрĕ çиçĕм пек,
Сулăмлăн та вирлĕн çеç
Тăшмана вăл пуçĕнчен.
Пырса çапрĕ, тĕлĕнчĕ —
Пуç чăлпар çеç сирпĕнчĕ.

Хăрах пуçлă çав тăшман,
Пÿтсĕр хура силтăман
Аялалла вăркăнать,
Хĕрхенмешкĕн йăлăнать.

Хайхискер, кунта çĕртен,
Пирĕн тусăмăр сунарçă
Уххине ак туртса ячĕ,
Çил пек сирпĕнчĕ çĕмрен.

Пырса çапрĕ вăл хăватлăн.
Çĕмрен турĕ хăй ĕçне.
Пырса çапрĕ те салатрĕ
Лешĕн юлашки пуçне.

Ир те пулчĕ. Çут хĕвел
Чупса тухрĕ уйхире.
Икĕ тус хайхи пăхаççĕ,
Икĕ тус хайхи кураççĕ:
Çĕрлехи çав усалăн
Пуçĕ пулнă ултавлă,
Çийĕ пулнă ылттăнран,
Капташки вара — тăмран.

Çапла Ирĕк Пусмăра
Çĕннĕ юнлă вăрçăра.
Икĕ пуçлă вăйхăватсăр
Пĕтнĕ тет Хăрпан-патша та
Çакăн хыççăнах вара.

Икĕ тус татах та лайăх
Тытăннă тет пурăнма.
Çапла аслă ăмăрткайăк,
Ик пуçли мар, суйи мар,
Ылттăнланă ултав мар.
Çынна кÿнĕ ирĕклĕх,
Чуна кÿнĕ çирĕплĕх.

Çирнĕ асап-хурлăха,
Телей кÿнĕ халăха.
Ÿссе çитĕн, курăн эс,
Мĕнле пулĕ пурăнăç.

* * *

Юмахне мучи пĕтерчĕ,
Чĕртрĕ сÿннĕ чĕлĕмне.
Ункăн-ункăн вăл вĕçтерчĕ,
Хăйĕн ырă тĕтĕмне.

Хветут тăчĕ. Унăн халĕ
Ăнлă хулĕсем çинче
Ăмăрткайăкăнни майлă
Çунат шăтнăн туйăнчĕ.

Икĕ аллине вăл сарчĕ,
Чăн-чăн ăмăрткайăкла,
Çил пек, вĕçнĕ пек чуптарчĕ
Малалла та тăвалла.

Ак унтан çÿле çитет те,
Янратать пур вăйĕпе:
—Курса юл, мучи, вĕçетĕп,
Паттăр ăмăрткайăк пек.

(Малалли пулать).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЗАВОДА ÇАКĂН ПЕК ĔÇЛЕКЕНСЕМ КИРЛĔ:

Метала сивĕлле ĕçлекен инженер-технологсем тата техник-технологсем, экономистсем, снабжени тата склад работникĕсем, табельщицăсем, нарядчицăсем тата секретарь-машинистка.

Çакăн пек квалификациллĕ рабочисем кирлĕ: токарьсем, револьверщиксем. фрезеровщиксем, строгальщиксем, шлифовальщиксем, автоматчиксем, волочильщиксем, термистсем, газогенераторщиксем, литейщиксем, сварщиксем, молотобоецсем, штамповщицăсем, прессовщиксем, модельщиксем, электромонтерсем, слаботочниксем, телефонисткăсем, браковщиксем, ещĕк тăвакансем, упаковщиксем, слесарь-инструментальщиксем, ремонт тăвакан слесарьсем, автослесарьсем, шоферсем, металл касакансем, жестянниксем, шорник-смазчиксем, малярсем, плотниксем, каменщиксем, штукатурсем, печниксем, кровельщиксем, истопниксем, дворниксем, подсобнăй рабочисем-уборщицăсем, прачкăсем, курьерсем, сторожсем, возчиксемпе грузчиксем (кусене общежити параççĕ).

Васкавлă ассенизаторсем кирлĕ (ĕçукçине килĕшнĕ тăрăх тÿлеççĕ тата общежити параççĕ).

Завода 14 çула çитнĕ ачасене ученик шучĕпе вĕренме илеççĕ. Вĕреннĕ хушăра учениксене 150—200 тенкĕ тÿлесе тăраççĕ, рабочисен норми тăрăх снабжени пулать.

Вахтерсем тата пожарнăй охранниксем кирлĕ (арçынсем те, хĕрарăмсем те кĕме пултараççĕ). Вĕсене общежити параççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар К. Маркс урамĕ, 80, пропуск бюровĕ. 11 сехетрен пуçласа кăнтăрла иртсен 3 сехетчен ыйтса пĕлме пулать.

3—3

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 1285

Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 42 п.